**2017-2018 - мĕш вĕренӳ çулĕнче**
**шкул шайĕнчи 8 - мĕш класра чăваш чĕлхипе тата литературипе**
**ирттермелли олимпиада хуравĕсем**

*Олимпиада ирттермелли вăхăт - 90 минут.*
*Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумайăйи 42 балл пухма пулать.*

1. *Куç, çăл* сăмахсем омоним пулнине тĕслĕхпе çирĕплетĕр. *(Пурĕ - 2 балл)*
*Кăвак куç-вырăнтан куç, вăрманти çăл- инкекрен çăл*

2. *Ултă кĕнеке, улттă килтĕм* сăмах майлашăвĕсенче хисеп ячĕсене мĕншĕн икĕ тĕрлĕ çырнине ăнлантарăр.
Хисеп ячĕ япала ятне ăнлантарнă чухне пĕр ç, глагола-икĕ çç çыраççĕ. *(2 балл)*
Тĕслĕхĕсемшĕн. *(1,5 балл) (Пурĕ - 5 балл)*

3. Предложенири чарăну паллине лартăр, мĕншĕн лартнине ăнлантарăр. *(3 балл)*
*Пĕчĕк ывăлăм Ванюш, куншăнах пуçна ан ус.(чĕнӳ сăмахне запятойпа уйăраççĕ)*
4. Фразеологизмсен пĕлтерĕшĕсене уçса парăр. *(Кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл. Пурĕ - 5 балл)*
**ăсран катăк – ухмах**
**ăса кĕр – вĕрен**
**ăса кĕрт – вĕрент**
**ăс (тăн) пар – вĕрент**
**ăс пух – ăслан, тăнлан**
5. Кайăк-кĕшĕк ячĕсене чăвашла куçарăр.Хăвăртан тата тăвата кайăк ятне вырăсла-чăвашла хушса çырса парăр. *(Кашни хуравшăн+хăй тĕслехĕсемшĕн 0.5 –шер балл. Пурĕ - 5 балл)*
**Чайка-чарлан, тетерев-ăсан, трясогузка-пăрчăкан, глухарь-карăк, филин-ӳхĕ, куропатка-хир чăххи**

6. Çак йĕркесем пил сăмахĕ шутне кĕреççĕ. *(2 балл)*

7. Чăвашсене, «тăван çыннăмсене» чĕнсе каланă. Çаврăмсенче вырăс халăхĕ, вĕрене çутта тухасси, çемье, шанăçпа пулăшу, ĕç çинчен каланă. *(Пурĕ 5 балл)*

8. Çак йĕркесене «Ултăк» калавран илнĕ. *(2,5 балл)* Автор ячĕ - Ю.Скворцов. *(2,5 балл) (Пурĕ - 5 балл)*

9. Çак сăмахсене литература тĕпчевçи М.Сироткин Кипек Мĕтри çинчен çырнă. *(2,5 балл)* «Кайăк тусĕ». *(2,5 балл) (Пурĕ - 5 балл)*
10. Алăри пӳрне ячĕсене йĕркипе çырса парăр. *(5 балл)*
Пуç пӳрне, шĕвĕр пӳрне,вăта пӳрне, ятсăр пӳрне, кача пӳрне.